*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

# ХРЕСЧЕН САССИ

Голос КРЕСТЬЯНИНА

83-84(2097-2098)\
2010, чӳк, 3
(юн кун)

Эрнере икĕ хут тухать

Хакĕ ирĕклĕ





| Шупашкарта | Вăхăт | 3.11 | 4.11 |
|---|---|---|---|
| Темпера-тура, $^0$C | 2-4 сехетре | +2 | +3 |
| | 14-16 сехетре | +4 | +6 |
| Çумăр çăвать | | 🌧 | 🌧 |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 749 | 742 |

## ЫРАН ШУПАШКАРТА АГРОПРОМЫШЛЕННОСТЬ КОМПЛЕКСĔНЧЕ ВĂЙ ХУРАКАНСЕНЕ ЧЫСЛАÇÇĔ



В.Филиппов сăн ӳкерчĕкĕ

Тар юхтарнă пайтах çу каçа,
Халь канма та юрать сухаçа.
Ирт, тăван та ял-йыш, тĕпеле,
Ĕç вĕçне хăнара тĕвĕле.

Кил хуçин ырă ен йăлара:
Пуç тайса чыс тăвать çăкăра,
Тĕпретмесĕр касать те ăна,
Кăрчама тултарать куркана.

Тытса пар-ха, хăта, ан тирке,
Çук пирте тĕртесси аврипе.
Ĕç тĕппи, пĕтесрен ан хăра,
Нӳхрепре пур татах та сăра.

Ф. МУРАТОВ.

## НОЯБРĔН 4-МĔШĔ – ХАЛĂХ ПĔРЛĔХĔН КУНĔ

### Хаклă ентешĕмĕрсем!

Сире Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп! Авалхи истори чăваш халăхне пĕрлĕх çав тери кирлине çирĕплетет. «Çынсăр çын пурăнаймасть», – тенĕ ăсчахсем. Ĕлĕкренех ниме йăлипе кил-çурт хăпартнă, пĕр-пĕрне пулăшу кӳнĕ. Халăх пĕрле савăннă, пăшăрханнă, ĕçленĕ, каннă, уявсене те пĕрлех ирттернĕ.

Халăх пĕрлĕхĕн кунне уявлама пуçлани нумаях пулмасть. Çапах та вăл Раççей патшалăхĕн пĕтĕмĕшле уявĕ пулса тăчĕ. Кашни çемьерех пĕр-пĕрне хисеплени, ăнланни, тăрăшни тата пулăшни, общество пурнăçĕнче хамăр ырăна тупма пĕлни, тĕрĕслĕх çĕнтерессе шанни пĕрлĕх çуратать. Çавăнпа та çĕршыв тата республика пуласлăхĕ эпир тӳрĕ кăмăлпа та яваплă ĕçленинчен, пĕр-пĕрне хакланинчен килет. Пĕрле эпир пур тĕллеве те пурнăçлăпăр, Чăваш Ене тата та илемлĕрех, хăтлăрах тăвăпăр!

Пĕтĕм кăмăлтан пурне те пысăк телей, сывлăх, туслăхпа килĕшӳ, ăнăçлăхпа ырă кăмăл-туйăм сунатăп!

М.ИГНАТЬЕВ,
Чăваш Республикин Президенчĕ.

# Кĕр кĕрекинче

КĔР ĂШШИ ÇУЛТАЛĂКА ТЕÇÇĔ. ХРЕСЧЕН ÇИЧĔ ТĔСЛĔ ТЫР-ПУЛНЕ, ПĔРЕР ÇИМĔÇĔН ПУХНĂ УЛМИ-ÇЫРЛИНЕ КĔЛЕТПЕ НӲХРЕПЕ КĔРТСЕ ХУНĂ ĔНТĔ. ХАЛĔ КĔР ТАРАВАТЛĂХĔПЕ КИЛЕНСЕ КĔРЕКЕ ПУХАТЬ.

**Республикăри районсенче çĕр ĕçченне чысласа савăнăçлă уявсем иртрĕç, уйрăмах маттуррисем патшалăх наградисемпе парнесене тивĕçрĕç.**

**Иртнĕ эрне кун Элĕк район ĕçченĕсем те ял хуçалăхĕпе тирпейлекен промышленность ĕçченĕсен уявне ирттерчĕç. Вĕсене ЧР Президенчĕ Михаил Игнатьев саламларĕ.**

### Ырми-канми тăрăшнă

Элĕкри ял тăрăхĕсен культурăпа кану центрĕнче «Кĕркунне – 2010» ятпа анлă курав иртрĕ. Ял хуçалăх предприятийĕсем, фермерсем, уйрăм кил хуçалăхĕсем хăйсен аллипе туса илнĕ-хатĕрленĕ çимĕçпе тĕлĕнтерчĕç: тĕш тырă, çĕр улми, кавăн, хуплу, уйран, çӳхӳ, пăшăхланă сысна, пыл, кăмакаран тин кăна пиçсе тухнă, ырă шăршипе сăмсана кăтăклакан çавра çăкăр... Сĕтелсем кĕр çимĕçĕсемпе йăтăнса лараççĕ. Президент çу шăрăхта типĕ пулнине пăхмасăрах тухăça сыхласа хăварассишĕн ырми-канми тăрăшнă ял çыннине тав турĕ. «Районсене тухса çӳренĕ май хресчен шанчăка çухатманнине, тар кăларса вăй хунине курса ĕнентĕм. Ял хуçалăх таварĕ туса кăларакансене пулăшма субсиди шучĕпе 580 млн тенкĕ уйăрнă, вырăх шутне упраса хăварма пултарнă предприятисем валли тата 200 млн тенке яхăн укçа пулать. Çавăн пекех ялапулăшасси çинчен калакан указа алă пусрăм», – терĕ М. Игнатьев. Михаил Васильевич Элĕк районне тата малалла аталанма инвестицисем явăçтармаллине, ĕçсĕрлĕх шайне чакарассишĕн çине тăрса ĕçлемеллине, ĕçе механизацилемеллине аса илтерчĕ.


*(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).*


# Аграрисене – хушма пулăшу

2009-2010 çулсенчи çанталăк условийĕсем çĕр ĕçченне йывăрлăха кĕртсе ӳкерчĕç. Шăрăх, типĕ çанталăка пула ял хуçалăх культурисен 211,7 пин гектарĕ пĕтрĕ, пĕтĕмĕшле тăкак 6 млрд тенкĕпе танлашать.

Йывăр тапхăрта ял хуçалăхне пулăшни ăна малалла та йĕркеллĕ аталанма май парĕ. Çавăнпа кăçал республика тата федераци бюджечĕсенчен АПКна финанс енчен пулăшас калăпăша чакарман. Хальхи вăхăтра ЧР Министрсен Кабинечĕ ял хуçалăхне патшалăх енчен пулăшма бюджетран 580,2 млн тенкĕ хушма укçа уйăрма палăртнă. Çав шутран шăрăх çанталăка пула тăкак тӳснисене саплаштарма – 302, 8 млн, вырăхчĕрлĕхе апатпа тивĕçтерме – 250 млн, кĕрхи культурăсен вăрлăхĕпе химикатсем туянма – 27,4 млн тенкĕ.

РФ Финанс министерствипе республика правительстви Чăваш Ене федераци бюджетĕнчен тавăрса памалла мар тӳрремĕн дотаци 125,4 млн тенкĕ уйăрасси пирки килĕшсе татăлнă. Çакă республика бюджетне йĕркелесе тăма кирлĕ. Федераци бюджетĕнчен кăçалхи типĕ çанталăка пула шар тӳснĕ субъектсене те çакăн чухлех уйăрĕç. Патшалăхăн ытти хушма пулăшăвĕ те 900 млн тенкĕлĕх пулĕ. Вăл республикăри лизинг фондне тӳлев вăхăтне тăсма, уй-хир ĕçĕсене ирттерме, вырăх апачĕ туянма, тĕш тырă хатĕрлеме, ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсен парăмне татма, çăмăллăх кредичĕсен тӳлев вăхăтне тăсма пулăшĕ.

## Яла аталантарма

Çак кунсенче Мускавра РФ Ял хуçалăх министерствипе ЧР Министрсен Кабинечĕ федераци бюджетĕнчен Чăваш Ене ял çыннисен пурăнмалли çурт-йĕрне лайăхлатма 40 млн тенкĕ хушма укçа уйăрасси пирки килĕшӳ алă пуснă. Çав шутра 20 млн тенкĕ – çамрăк çемьесемпе специалистсене çурт-йĕрпе тивĕçтерме. Çакă ялта пурăнакан 170 çемьене пулăшĕ.

2010 çулта федераци бюджетĕнчен ялта пурăнакансен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма, çав шутра çамрăк çемьесемпе специалистсем валли те, 70 миллион тенкĕ куçнă (хальхи 40 млн тенке шутламасăр), республика бюджетĕнчен 62,33 миллион тенкĕ уйăрма палăртнă. Кăçал çурт-йĕр тума (туянма) социаллă пулăшу парасси пирки 299 свидетельство алла тыттарнă.

Çакна палăртмалла: 2003 çултанпа республикăна федерацин «2012 çулччен яла социаллă аталантарасси» тĕллевлĕ программипе 820,1 млн тенкĕ çитнĕ, çав шутра граждансемпе çамрăк специалистсен пурăнмалли условийĕсене лайăхлатма – 479,4 млн тенкĕ. 3400 çемье ялти çурт-йĕрне лайăхлатма пултарнă. Çав шутра «АПК аталанăвĕ» наци проекчĕпе – 1017 çамрăк çемьепе специалист.

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

# «Хам вырăна тупрăм»*

**90-мĕш çулсен пуçламăшĕнче йĕркеленнĕ хресчен (фермер) хуçалăхĕсенчен нумайăшĕ йывăр çĕклеме чăтаймасăр тахçанах арканнă. Хăй тĕллĕн ĕçлеме кашнинех вăй-хал, пултарулăх çитеймест çав. Елчĕк районĕнчи Таяпа Энтрири Петровсен фермер хуçалăхĕ вара чăрмавсене çĕнтерме пултарчĕ.**



### Çĕр ĕçĕпе чун канать

Çĕр хăйне пăхнине, хисепленине кăмăллать. Петровсем çĕр ĕçне чун-чĕререн юратса туса пыни иккĕлентермест. Анатолий Васильевич фермер пире уй-хирне хаваспах кăтартса çӳрерĕ. Тикĕс те таса лаптăксем кăмăла çĕклеççĕ. Кĕрхи культурăсем акса пĕтернĕ, çĕртме тунă хыççăн канма та юрать темелле. Çавах та техника арендăна илнĕ уйран туха пĕлмест. Юхăннă, çум курăкпа хупланнă çĕре йĕркене кĕртме самай тар тăкмалла. Темиçе хут сухалама, химикатсемпе усă курма тивет. «Унсăрăн çитес çул каллех хыт хура пусса илĕ, – ăнлантарать А.Петров. – Çĕр ĕçĕ йывăр, тăкаклă. Анчах агротехникăна пăхăнса пырсан тупăш та кӳрет».

Пурнăçне пархатарлă та йывăр ĕçпе çыхăнтарнишĕн пĕртте ӳкĕнмест вăл. Чăваш ял хуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă çамрăк агроном хаваспах тăван тăрăха таврăннă, колхоза вырнаçнă. «Хулара чуна тăвăр, – терĕ фермер. – Анлă уйхире тухатăп та кăмăл çĕкленет, ĕшенни иртет».

1991 çулта çĕр ĕçĕнче опыт пухнă специалист виçĕ гектар илсе фермер хуçалăхĕ йĕркелесе ярать. Унта Петровсем сухан, кишĕр, кăшман çитĕнтерме тытăнаççĕ.

– Техника, лаша пулманнипе алă вăйне кăна шаннă, – аса илет А.Петров. – Юрать йывăр тапхăрта тăвансем пулăшрĕç. Вĕсем хавхалантарнипех тытăннă ĕçе вĕçне çитерме шутларăм.

«Смычка» хуçалăхăн 50 гектар çĕрне илсен тин Петровсем МТЗ-82 тракторлă пулнă. Ăна туянма Елчĕк район администрацийĕ те пулăшнă: фермерăн техника илме салук çуккипе поручитель пулма килĕшнĕ. Ертӳçĕсем шанни, ĕненни Анатолий Васильевича тата тăрăшарах ĕçлеме хавхалантарнă. Пахча çимĕç ӳстернипе пĕрлех рапс, тырă акса туса илнĕ. Хальхи вăхăтра фермерăн 365 гектар çĕр. Пурлăхпа техника бази те палăрмаллах пуянланнă. Тракторсем çумне вĕр çĕнĕ «Агрос» комбайн, КамАЗ хушăннă. Унăн чĕр тавар хранилищи, тырă сортласа тасатмалли оборудовани те пур. Вĕсене панкрута тухнă хуçалăхран туянса юлнă. Ăшă гараж, мастерской çĕкленĕ.

Йĕтем çинчи самай пысăк тырă купи тĕлĕнтерчĕ. Пĕчĕк хуçалăхрах пӳлмене тултарма май пурри савăнтарчĕ.

– Кăçал тухăç пĕчĕкрех. Агротехникăна пăхăнсах ĕçлесе пытăмăр, анчах гектартан вăтамран 12 центнер çеç тухрĕ, – пăшăрханать Анатолий Васильевич. – Çапах пахалăхне тиркеймĕн. Тулă клейковини 31 процент.

Паха чĕр тавара аякран килекенсем килограмне 7 тенкĕпе туянма та хатĕр. Фермер вара Шупашкарти элеватора йӳнĕпех сутать.

– Патриот эпĕ, – терĕ вăл куларах, – паха çимĕçе ютта ярас килмест.

100 гектар çинчи рапс вăрлăхне вара Хусанах ăсатаççĕ. Уншăн удобрени, акмалли-лартмалли материалсем туянаççĕ. «Рапс тупăш та, тăкак та кӳмест. Çĕр пулăхне лайăх пуянлатать».

### Ĕçчене ĕç парăнать

Акакан-сухалакан лаптăксем ӳснĕ май Анатолий Васильевич татах та хăватлă, энергие перекетлекен техника туянма ĕмĕтленет. Камаза Раççей ял хуçалăх банкĕнчен илнĕ çăмăллăх кредичĕпе туяннă вăл. Парăмăн çуррине парса татнă ĕнтĕ.

– Ку банкпа ĕçлеме шанчăклă, – терĕ Петров. – Кредит илсенех тӳлев вăхăтне çулталăка тăсрĕç. Ытти банксем салуксăр кредит памаççĕ, кунта çакенĕпе çăмăлрах. Пысăк парăма кĕриччен кашни банкăн кредит парас условийĕсемпе паллашрăм. Раççей ял хуçалăх банкĕ çĕр ĕçченĕшĕн меллĕрех, лайăхрах пулнине ăнлантăм. 1848 пин тенке пилĕк çуллăха илтĕм. Кредитăн çулталăкри процент ставки 16, анчах патшалăх субсидиленĕ хыççăн 4 процент кăна юлать. Халĕ акă кăçалхи йывăр çанталăка кура тӳлев вăхăтне тăсасси пирки пĕлтерчĕç. Тупăш-тăкаксене шутласа пăхнă хыççăн, вăй çитереймесен, тен, эпир те вăл çăмăллăхпа усă курăпăр.

– Шанчăклă клиентсемпе ĕçлеме пире те аван. Вĕсене пулăшма, çăмăллатнă йĕркепе кредит пама тăрăшатпăр, – калаçăва хутшăнать Раççей ял хуçалăх банкĕн Елчĕкри хушма офисĕн ертӳçи Николай Миллин. – Районти хăш-пĕр хуçалăх кредитăн тӳлев вăхăтне тăсрĕ ĕнтĕ. Çакă йывăр тапхăрта сывлăш çавăрса яма, ака-суха ĕçĕсене лайăхрах хатĕрленме пулăшĕ.

Петровсем те пулас тухăç çинчен паянах шутлаççĕ. Вĕсем 75 гектар кĕрхи тырă акса хăварнă. Çĕртме 200 гектар йышăннă.

– Пур ĕçе те мĕнле ĕлкĕретĕр?

– Хĕрӳ тапхăрта ял çыннисене явăçтаратпăр. Мăшăрăм та, Галина Никифоровна, ачасем те юнашар. Эпĕ хам вырăна çĕр ĕçĕнче, фермер хуçалăхĕнче тупрăм. Чун кăмăлланă çул-йĕртен пăрăнмăп.

Ывăлĕ, Сергей, инженер-механик профессине алла илнĕскер, амăшĕпе пĕрлех çĕр ĕçĕнче тăрмашать, техникăна юсавлă тытса пырать. Наташа хĕрĕ вара документсем йĕркелеме пулăшать, уй-хирте вăй-хурать. Ачисем те ашшĕ-амăшĕ пек ĕçчен, пултаруллă, йывăрлăхран хăрамасăр ӳсеççĕ. Тепĕр тесен улми йывăççинчен хăçан аякка ӳкнĕ? Туслă çемьере ĕç те ăнса пырать çав.

Л.НИКИТИНА.

Сăн ӳкерчĕкре – Н.Миллинпа А.Петров.

# Çын ĕçпе илемлĕ

**Фермер хуçалăхĕн ĕнисем эпир çитнĕ чухне çерем çинче сĕтеклĕ те ешĕл курăк çисе çӳретчĕç. Çуллахипе танлаштарсан уй-хирсемпе улăхсенче çимелли нумай халь выльăхсем валли. Пĕр чарăнми пĕрĕхсе çăвакан сивĕ çумăр та ним те мар кĕтӳçшĕн. Чи кирли – ĕнисем тутă пулчăр. «Ĕнен сĕчĕ чĕлхи çинче» тесе ахальтен каламаççĕ вĕт.**

Красноармейски тăрăхĕнчи «Герой» предприяти аркансан Чатукассинчи икĕ çемье çухалса кайман, хăйсем пĕчĕк фермер хуçалăхĕ йĕркелеме шутланă. Çемьене мĕнле те пулин тăрантармалла-çке. Пурте Мускава пăрахса тухса кайсан ялта кам юлĕ? Çемьерен уйрăм пурăннинче ним лайăххи те çук. Аркадий Васильевич Степановпа (хресченпе фермер хуçалăхĕн пуçлăхĕ халь) Вадим Германович Кураков иккĕшĕ те малтан «Геройра» ĕçленĕ. А.Степанов Чăваш патшалăх ял хуçалăх институтĕнче зоотехник специальноçне алла илнĕ хыççăн тăван тăрăхах таврăнса зоотехникра, бухгалтерта сахал мар çул тăрăшнă. Çĕрпӳри техникумра инженер-механика вĕреннĕ В.Кураков та çак хуçалăхранах.

Тăватă çул каялла икĕ çемье лайăх канашланă та хресченпе фермер хуçалăхне йĕркелесе яма кашниех 5 çуллăха 100-шер пин тенкĕ кредит илнĕ, çав укçапа малтан юхăнма тытăннă хуралтăсене йĕркене кĕртнĕ, каярах măйракаллă шултра выльăх туяннă.

– Ĕнесем кӳрсе киличчен малтан фермăна хамăр выльăхсене килсе ятăмăр. Пăрушкасем пĕр кунхине шалт тĕлĕнтернĕччĕ, çĕнĕ çĕре хăнăхманнипе çӳллĕ карта урлă каçса кил умне çитсе тăнăччĕ. Пачах пĕлмен çулпа виç çухрăм хăйсемех утса килнĕ. Кушак çурисем евĕр вĕсем таçта айкка кайса аташтарсан та кил тĕлне тупаççĕ вĕт, – тет Аркадий Васильевич.

Кредит хăратмасть ку çемьесене. Килти хушма хуçалăха аталантарма паракан кредита тӳлесе татсан икĕ çул каялла тепĕр 600 пин илнĕ, унпа утă çулакан трактор туяннă. Çапла майпа хĕл валли выльăх-чĕрлĕх апачĕ хатĕрлесси чылай çăмăлланнă.

Нумаях пулмасть инвестици проекчĕпе килĕшӳллĕн тепĕр 800 пинлĕх кредит илнĕ. Ку укçа-тенкĕпе Етĕрне районĕнчи «Ленинская искра» хуçалăхран ăратлă пушмак пăрусем илсе килнĕ. Ĕне сумалли оборудовани те туяннă фермер хуçалăхне тытса тăракансем. 29 ĕнене халиччен вара алăпах суса пурăннă. «Карчăкăрсене капла ĕçлеттерсе вĕлеретĕр вĕт», – тесе пĕрре мар каланă ял çыннисем. Юлашки вăхăтра ĕç чылай çăмăлланнине, хăвăртланнине пытармаççĕ фермерсен мăшăрĕсем. Пĕтĕмпе 79 пуç măйракаллă шултра выльăх халь хуçалăхра.

– Выльăх-чĕрлĕх шутне татах та ӳстересшĕн-ха. Ĕнисене кăна мĕнле те пулсан 60 пуçа çитересчĕ. Талăкри сăвăм халь кашнинчен 13-14 литр таранах. Хамăр ĕçшĕн хамăр яваплă. Хăнăхса çитрĕмĕр-ши – ытлашши йывăррине туймастпăр, – тет Аркадий Васильевич. Сĕтрен тупăш пуррине пытармасть вăл. Паллах, çакă ĕнесене мĕнле çитернинчен, мĕнле условисенче усранинчен нумай килет. Халăхран та кунсерен 250 литр таранах сĕт пуçтараççĕ (1 литрне 13,5 тенкĕпе).

– Ачасем пире нумай пулăшаççĕ. Çуллахи вăхăтра хаваспах кĕтӳ кĕтеççĕ, ытти мĕнпур ĕçе хутшăнаççĕ. Паллах, вĕсене уншăн укçа-тенкĕпе хавхалантаратпăр. Кĕсйисене çу тăршшĕпе мĕн чухлĕ шалу кĕрессе малтанах пĕр-пĕр бухгалтертан лайăхрах шутласа хураççĕ, кирлĕ-кирлĕ мар çĕре тăккаламаççĕ, шкула валли хатĕр-хĕтĕр туянаççĕ, – теççĕ фермерсем.

Çу кунĕсем шăрăх та типĕ тăнă пулин те выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрленĕ кăçал. Уттине ытларах улăхра çулнă, нӳрĕ вырăнта лайăх ӳснĕ вăл. Хĕл хырăмĕ аслине лайăх ăнланаççĕ фермерсем. Ĕне выльăх валли 162 гектар çĕр çинчен 200 тонна сенаж, 50 тонна утă, 10 тонна улăм, 30 тонна тĕш тырă туса илнĕ.

Пĕтĕмпе 5 çынлă пĕчĕк çеç хуçалăхра ĕç кал-кал пырать. Витесене юсанă, шуратнă. Çĕрсене тепĕр çул валли лайăх сухаласа хăварнă. Сенаж валли акнă люцерна та ем-ешĕлехчĕ. Вадим Кураковăн пиччĕшĕ Владимир та кашни кунах хуçалăхра. Юсав ĕçĕсемпе аппаланать, пăрусем валли апат пĕçерет, столяр та хăех. Эпир килнĕ кун уйра кĕтӳ кĕтетчĕ.

– Ĕçрен нихăçан та хăрамалла мар, вăл хăй санран хăратăр. Ӳркенмесен, мал ĕмĕтлĕ пулсан ялта та лайăх пурăнма пулать. Пĕтĕмпех хамăртан килет тата. Çын ĕçпе илемлĕ тесе ахальтен каламан çав ваттисем. Паянхи куна пире хамăр ĕç тивĕçтерет, ытлашшине хапсăнмастпăр, мĕн пурри те çитет, – теççĕ фермерсем.

Е.АТАМАНОВА.

ХАÇАТРА ÇЫРНĂ ХЫÇÇĂН

## Конкурса хутшăнма сĕннĕ

**«Хресчен сассин» 65-мĕш номерĕнче (сентябрĕн 1-мĕшĕ) «Сивĕ, çĕршĕннĕ клуб кама илĕрттĕр?» статья пичетленнĕччĕ. Унта Патăрьел районĕнчи Çĕньял клубĕ çинчен çырнăччĕ.**

**Чăваш Республикин культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви хаçатри материалпа паллашнă май çакна пĕлтерчĕ. Статьяри лару-тăрăва тĕрĕслесе шута илме Патăрьел район администрацийĕн пуçлăхĕ ячĕпе ыйтса çыру янă, çакнашкал хурав илнĕ. Патăрьел район сучĕн йышăнăвĕпе Çĕньял культура çуртне чăннипех те 90 куна хупнă. Ăна кирлĕ шайра юсаса çĕнетме ял тăрăхĕн укçа-тенкĕ çук. Район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕпе клуб çуртне пахалама комисси йĕркеленĕ. Комисси малашне культура çурчĕ усă курма юрăхсăррине, çавна май мероприятисене вăхăтлăха вырăнти вăтам шкулта ирттермеллине палăртнă. Çавăн пекех ял тăрăхĕн пуçлăхне 2011 çулта тăкаксене пĕрле саплаштарас тĕллевпе республикăри ял тăрăхĕсене тирпей-илем кĕртес тата комплекслă компактлă çуртйĕр тăвас енĕпе ирттерекен проектсен конкурсне хутшăнма сĕннĕ.**

СЕТКА-РАБИЦА, ПРОФНАСТИЛ, ВОРОТА, КАЛИТКИ, ЗАБОРЫ, ТРУБЫ.
Доставка. Установка.
Тел.:29-11-12, 8-927-668-75-74.
Гарантия.
Пенсионерам скидка – 5%.

ГРАВМАССА, ЩЕБЕНЬ, ПЕСОК, КЕРАМЗИТ, ТОРФ.
Недорого.
Доставка.
Тел.:38-70-15,
8-927-668-70-15.

## ЦИФРĂСЕМПЕ ФАКТСЕМ

◆Кăçал республикăри хуçалăхсем 133 пин тонна тĕш тырă пухса кĕртнĕ. Çакă иртнĕ çултинчен 449 пин тонна сахалрах. Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсен гектарти вăтам тухăçĕ 8-10 центнер.

◆Çĕр улми 4051 гектар çинчен кăларса тирпейленĕ. Гектарти вăтам тухăç – 79,2 центнер. Тăвай, Комсомольски, Куславкка районĕсенче кăтарту пысăкрах.

◆Типĕ, шăрăх çанталăк пахча çимĕç лаптăкне те палăрмаллах чакарнă. Хальлĕхе 144 гектар çинчен 1636 тонна пуçтарса илнĕ. Ку енĕпе Куславкка, Комсомольски, Елчĕк тăрăхĕсенче лайăхрах ĕçленĕ. Пахча çимĕçĕн гектарти вăтам тухăçĕ 114 тоннăпа танлашнă.

◆Республикăри хуçалăхсем кĕрхи культурăсене 119340 гектар çине (пĕлтĕрхин 99,5 проценчĕ) акса хăварнă. Çĕртме 158 пин гектар çинче тунă. Кашни выльăх пуçне 16,5 апат единици янтăланă.

◆Кăçалхи тăхăр уйăхра мĕнпур категорири хуçалăхсенче 72,8 пин тонна аш-какай (чĕрĕ виçепе) туса илнĕ. Сĕт – 408,4 пин тонна, чăх çăмарти 220,9 миллион штук. Иртнĕ çулхи çак тапхăртипе танлаштарсан аш-какай, сĕт, çăмарта илесси чакнă.

◆2010 çулхи октябрь тĕлне республикăра măйракаллă шултра выльăх 241,7 пин пуç шутланнă (пĕлтĕрхи çак вăхăтрин 97,5 проценчĕ), çав шутра 120 пин ĕне (97,6). Вĕсен йышне Патăрьел, Вăрнар, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Шăмăршă, Тăвай районĕсенче кăна упраса хăварма вăй çитернĕ. Етĕрне тăрăхĕнче кĕтӳ палăрмаллах сайралнă. Республикăри мĕнпур категорири хуçалăхсенче 272,2 пин сысна. Чăх 2947,8 пин пуç.

◆Выльăх-чĕрлĕх хисепне 2011 çулхи январь тĕлне упраса хăварнă регионсене Раççей правительстви 5 миллиард тенкĕ уйăрса пама палăртнă.

◆«Ылтăн кĕркунне – 2010» куравран Чăваш Енри агропромышленность организацийĕсем 46 медальпе таврăннă, çав шутра 30 ылтăн медаль, кĕмĕлли – 13, пăхăрри – 3. Предприятисенчен «Чăваш бройлерĕ», «Етĕрне сĕчĕ», «Етĕрнери аш-какай комбиначĕ», «Вăрнарти аш-какай комбиначĕ», «АККОНД», «Шупашкарти «Букет Чувашии» сăра тăвакан фирма» уçă пĕрлешӳсем, Чăвашпотребсоюз уйрăмах палăрнă.

◆«Ылтăн кĕркунне – 2010» курав вăхăтĕнче Чăваш Енри предприяти-организацисем Мускавра ял хуçалăх продукцине 1 миллион тенкĕлĕх сутнă.

◆ЧР Президенчĕ Михаил Игнатьев топинамбур (çĕр айĕнче ӳсекен груша) хатĕрлекен завод тăвассине хăй тĕрĕслесе тăрĕ. Инновацин пысăк проектне хута яни республикăри пушă выртакан çĕрсемпе тухăçлă усă курма, çынсене ĕçпе тивĕçтерме, хыснана налукпа пуянлатма пулăшĕ. Завод çулталăкра 40 пин тонна топинамбур тирпейлесе хатĕрлĕ. «Синтез-Агро» пĕрлешӳ малтанхи продукцие çитес çулах илме палăртнă. Ӳсен-тăрана Куславкка, Çĕмĕрле районĕсенче лартса хăварнă та ĕнтĕ.

◆Кăçалхи тăхăр уйăхра республикăри ял хуçалăх предприятийĕсем мĕнпур майпа усă курса 204 миллион тенкĕлĕх 339 техника туяннă. Комсомольски, Вăрнар, Элĕк, Красноармейски районĕсенче машина-трактор паркĕсем палăрмаллах çĕнелнĕ, хăватлă техникăпа пуянланнă.

◆«АПК аталанăвĕ» наци проекчĕ тата ял хуçалăхне аталантарма йышăннă патшалăх программи хута кайнăранпа республикăри пĕчĕк формăллă хуçалăхсене 8,2 млрд тенкĕлĕх 50 пин çăмăллăх кредичĕ уйăрнă, çав шутра 2010 çулта – 863,3 млн тенкĕлĕх 5107 кредит.

◆Патшалăх пулăшăвĕпе 49 пин çын усă курнă, 7,2 млрд тенкĕлĕх çăмăллăх кредичĕ илнĕ. 2006-2010 çулсенче республикăра пурăнакансен 23,1 проценчĕ çăмăллăх кредичĕпе усă курнă. Патăрьел районĕнчи Патăрьел ял тăрăхĕн кăтартăвĕ – 65,8 процент. Çĕмĕрле районĕнчи Краснооктябрьски ял тăрăхĕн – 2,8 процент.

◆Ял хуçалăхне аталантарма патшалăх программипе 2006–2010 çулсенче пĕчĕк формăллă хуçалăхсене 1384 млн тенкĕлĕх субсиди уйăрса панă, кăçал – 199 млн тенкĕлĕх.

## ÇИВĔЧ ЫЙТУ

Типĕ, шăрăх çу ял хуçалăх комплексне йывăрлăха кĕртсе ӳкерчĕ. Республикăри хуçалăхсем пĕтĕмĕшле 5,9 млрд тенкĕ таран тăкак тӳсрĕç. Тырă, пахча çимĕç сутса пысăк тупăш илес шанчăк пăчланчĕ. Хальхи вăхăтра чылай хуçалăх выльăх-чĕрлĕх пулăшнипе тытăнса тăрать. Выльăх йышлă усракансем аш-какай, сĕт сутса тăкаксене саплаштарма, малалла аталанма майсем тупаççĕ. Шел, выльăх апачĕ çителĕксĕрри халех сисĕнет. Хуçалăхсемпе уйрăм çынсем ытлашши пуçа сутма тытăнчĕç. Măйракаллă шултра выльăх йышне Патăрьел, Вăрнар, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Шăмăршă, Тăвай районĕсенче кăна упраса хăварма вăй çитернĕ. Çав шутра ĕнесене – Патăрьел, Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă тăрăхĕсенче. Улатăр енче вара ĕне выльăх хисепĕ 1366 пуç чакнă. Муркаш районĕнче кĕтӳ 1492 пуç çухатнă. Çĕрпӳ, Вăрмар, Шупашкар, Етĕрне тăрăхĕсенче те лару-тăру çивĕч. ЧР Министрсен Кабинечĕ йывăр лару-тăрăва шута илсе хуçалăхсене выльăх апачĕ туянма 250 млн тенкĕ хушма пулăшу пама палăртнă. Çак укçан çурри хресчен патне çитнĕ те ĕнтĕ. Республикăри выльăх йышне упраса хăварма пулăшĕ-ши ку? Мĕн шутлаççĕ кун пирки ертӳçĕсем?

# Вите пушансан хуçалăх арканать



С.Журавлев сăн ӳкерчĕкĕ

### «Выльăхсăр мĕнле пурăнас?»

Вăрнар районĕнчи «Броневик» хуçалăха Владимир Иванович Репин ултă çул каялла ертсе пыма тытăннă. Аркана пуçланă предприятие пĕрчĕн-пĕрчĕн тенĕн пуçтарса каллех ĕçлеттерсе янă. Хальхи вăхăтра 520 ĕне выльăх усраççĕ, сăваканни 200. Наци проекчĕ пулăшнипе илнĕ кредитпа фермăна юсаса çĕнетнĕ, сĕт сивĕтмелли оборудовани туяннă.

– Эпир халĕ сĕт сутса çеç тупăш илетпĕр. Уй-хирте туса илни йăлтах выльăх-чĕрлĕхе тăрантарма каять, – каласа парать ертӳçĕ. – Куллен 1800 килограма яхăн сĕт ăсатсан та уйăхсерен кассăна 700-800 пин тенкĕ пуçтарăнать.

Ертӳçĕ малашне ăратлă выльăх ĕрчетме ĕмĕтленет. Умри чăрмавсем – çĕр çителĕксĕрри, специалистсем çукки – хăратмаççĕ ăна. Халĕ Чулхула облаçĕнчен тырă, жом, Элĕк енчен сенаж туянаççĕ.

– Выльăх апачĕ илме патшалăхран 700 пин тенкĕ пулăшу илтĕмĕр. Хамăр укçана икĕ миллион тенкĕ хывăпăр. Тепле йывăр пулсан та витесене пушатмăпăр, – палăртрĕ В.Репин. – Вĕсемсĕр мĕнле пурăнас?

– Выльăх-чĕрлĕх отраслĕ çынсене ĕç тупма, шалу илме пулăшать, – терĕ ЧР ял хуçалăх министрĕ С.Павлов. – Раççейпе Чăваш Ен правительствисем çак отрасле аталантарма татăклă мерăсем йышăнаççĕ.

Министр пĕлтернĕ тăрăх кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх хисепне чакарман хуçалăхсене субсиди парĕç. Анчах вĕсен 2011 çулхи январь тĕлне те кĕтӳ шайне тытса тăмалла. Унсăрăн илнĕ субсидие бюджета тавăрса пама тивĕ. Федераци бюджетĕнчен выльăх-чĕрлĕх хисепне чакарман регионсене 5 млрд тенкĕ укçа уйăрма пăхнă. Ку – ял хуçалăх продукцине туса илекенсемшĕн курăмлă пулăшу.

– Хушма хуçалăхсене выльăх апачĕпе тивĕçтерме йывăртарах, – терĕ Сергей Владимирович. – Республикăна Казахстанран 1000 тонна тырă кӳрсе килнĕ. «Апат-çимĕç» унитари предприятийĕ хушма хуçалăхсене те тырă сутма хатĕр, анчах вĕсене патшалăхран тӳремĕн дотаци пама йывăртарах.

Бюджетран уйăракан укçа ял хуçалăх предприятийĕсене тӳлеме те çитмест-мĕн. Апат сахаллипе çынсем те ытлашши выльăхран хăтăлма тăрăшни сисĕнет. Вырăнти предприятисем вĕсенчен тивĕçлĕ хакпа туянсан Чăваш Енре выльăх-чĕрлĕх хисепĕ чаксах каймĕ.

### Сахал апатпах – пысăк тухăç

– Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме нихăçан та çăмăл пулман, – терĕ Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн ректорĕ Николай Кириллов. – Кăçал вара республикипе те кашни выльăх пуçне вăтамран 17 центнер апат единици çеç янтăланă. Йĕркеллĕ хĕл каçма 30 процентран кая мар кирлĕ. Анчах апат сахалли витесене пушатса хăвармаллине пĕлтермест. Мана ĕлĕкрен выльăх-чĕрлĕхпе лайăх ĕçлесе пынă Муркаш, Çĕрпӳ районĕсем каялла чакни пăшăрхантарать. Ĕне выльăха пĕтерни хуçалăхсемшĕн сиенлĕ, тăкаклă. Халĕ аш йӳнĕ, сутса услам тăваймăн. Çитес çул вара хакланасси халех паллă. Кăçал мĕнле те пулин упраса хăвармаллах кĕтĕве.

Сахал апатпах перекетлĕ, тухăçлă усă курмалла, продукци илессине ӳстермелле. Мĕнле? Апата лайăх хатĕрлесе, çемçетсе çитермелле. Унăн 90-95 проценчĕ выльăхшăн усăллă пултăр, тислĕкпе тухса ан кайтăр. Хальлĕхе çак кăтарту 60-65 процентпа кăна танлашать. Сăмахран, 4 килограмм комбикорма тăвата пая уйăрса кунне тăвата хут çитермелле ĕнене. Çапла тусан тутлăхлă япаласене организм лайăхрах йышăнать, продукци илесси те ӳсĕ.

Хушма хуçалăхсенче ĕне выльăхран васкавлă хăтăлса йăнăшрĕç. Вăл йӳнелсе кайрĕ. Сутма çăмăл, туянма йывăр. Кĕтĕве ӳстерме 4-5 çул кирлĕ. Кил картишĕнчи выльăх çемьене пĕтĕçтерет, ĕçпе тивĕçтерет. Ĕçлекен çын хăйне те йĕркеллĕ тытать.

### «Пулăшу тĕллевлĕ пулмалла»

Муркаш районĕнчи «Ударник» хуçалăхра та выльăх-чĕрлĕх валли апат 50 процент чухлĕ кăна хатĕрленĕ. Хальхи вăхăтра кунта măйракаллă шултра выльăх 1150 пуç усраççĕ, çав шутра сăваканни 510. Мĕнле хĕл каçармалла вĕсене? Предприятие вăтăр çул ытла ертсе пыракан Платон Давыдовшăн та ку чăннипех пуç ватмăш. Унччен умри чăрмавсенчен хăйсен вăйĕпех тухса пынă-ха, халĕ ирĕксĕрех çӳлтен пулăшасса кĕтмелле.

– Выльăх йышне упраса хăваракан хуçалăхсене субсиди пани аван, – шухăшне пĕлтерет Платон Павлович, – анчах мĕншĕн кăтартăва пĕлтĕрхипе танлаштармалла? Кам шутланă ун чухне лару-тăру мĕнле çаврăнасса? Паянхи тĕллев пуррине упраса хăварасси пулмалла. Иртнĕ çул пирĕн те ĕнесем ытларахчĕ, анчах апат çителĕксĕррипе чакарма тиврĕ. Кĕтĕве ӳстерме пулĕ, мĕнпе тăрантармалла? Чи пĕчĕк виçепе шутласан та хĕл каçма ĕне выльăх пуçне татах 8-10 центнер апат единици хатĕрлемелле. Тепĕр майлă каласан, тăвата тонна утă-улăм, сенаж, силос кирлĕ. Вăл выльăх пуçне 12-15 пин тенке кайса ларать. 510 ĕне валли хушма апат тата та 5-6 миллион тенкĕлĕх туянмалла. Бюджетран пулăшмасан тĕп кĕтĕве упраса хăварма йывăр.

Нумайăшĕ сĕт хакĕ ӳсет, тупăш ытларах кĕрет тесе шутлать. Анчах тăкакĕсем те виçесĕр ӳссе пыраççĕ: электроэнерги, газ, налук, шалу тӳлемелле. Выльăх йышне упрама çитес çул та укçа тĕллевлĕ уйăрса пулăшмалла е туса илнĕ пĕр килограмм сĕт пуçне икĕ тенкĕ субсидилемелле. Çакна ытти регионта пурнăça кĕртнĕ ĕнтĕ. Эпир мĕнрен кая?

Ертӳçĕсене выльăх апачĕ туянса тӳснĕ тăкака республика бюджетĕнчен саплаштарнă чухне выльăх-чĕрлĕхе условнăй пуçа куçарса шутлакан коэффициент та тивĕçтермест. Мĕнле майпа 50 чăх-чĕпе пĕр ĕнепе е сысна амипе танлаштарăн? Субсиди уйăрмалли йĕрке тăрăх хуçалăха выльăх апачĕ илме пурĕ те виçĕ миллион тенкĕ кăна тивĕ. Паллах, çакă çителĕксĕр.

Выльăх-чĕрлĕх пулсан хуçалăх пурăнать, аталанать. Витесем пушанса юлсан вăл арканать, çынсем ĕçсĕр, тупăшсăр юлаççĕ. Ял çыннисен социаллă пурнăç шайĕ вырăнти предприяти аталанăвĕнчен те килет. Эппин, йывăр тапхăрта ăна путма парас марччĕ.

Л.НИКИТИНА.

# Тӑван ҫӗр хӑвачӗ

**Хресченшӗн хӗрӳ тапхӑр вӗҫленсе пырать. Уй-хирти ӗҫсене вӗҫленӗ, кӗр тыррисем ешереҫҫӗ, кайӑксем кӑнтӑра вӗҫме хатӗрленеҫҫӗ. Килти пахчасенче хӗле хатӗрленсе ыхра лартаҫҫӗ, йывӑҫсене шуратаҫҫӗ. Чӑваш Ен Президенчӗ Михаил Игнатьев та хӗле хатӗрленсе ҫитнӗпе пӗр. Пӳлмери тухӑҫ чуна савӑнтарать.**



Шупашкар районӗнчи Кӗҫӗн Турхан ялӗнче ҫуралса ӳснӗ Михаил Васильевич. Ашшӗпе амӑшӗн ҫурчӗ халӗ те ларать. Ҫемьере чи кӗҫӗнни пулнӑскер кил вучахне сӳнтермелле мар тесе шухӑшлать.

Туслӑ ҫемье харпӑрлӑхӗнче 80 сотӑй ҫӗр. Игнатьевсене икӗ ачи – Иванпа Мария – пулӑшать. «Канмалли кунсенче ӗҫлетпӗр, хамӑр пахчара туса илнӗ ҫимӗҫпе тӑранса пурӑнатпӑр. Ачасене те килӗшет, вӗсем кунтах канаҫҫӗ те, ӗҫлеҫҫӗ те», – тет Михаил Игнатьев.

Ҫу шӑрӑх та типӗ пулнине пӑхмасӑрах пӗчӗк ҫӗр лаптӑкӗнчех пысӑк тухӑҫ пухса кӗртнӗ.

**– Михаил Васильевич, тухӑҫсӑр ҫул та ҫакӑн пек кишӗр ҫитӗнтерме пулать-и?**

– Кӑҫал кишӗр пурин те пулнӑ пулӗ, ҫитменнине килтине шӑварасси те йывӑрах мар. Хальхи технологисемпе усӑ курни те пулӑшать. Вӑрлӑх суйласа илме пӗлмелле. Эпӗ шанчӑклӑ дилерсенчен кӑна туянатӑп. Харӑсах 2-3 сорт акатӑп. Ҫӗре тӗрӗс хатӗрлени, шӑварни, апатлантарни пӗлтерӗшлӗ. Ним йывӑрри те ҫук. Тухӑҫ ӑнсан – чун савӑнать. Ӗҫлени сая кайсан вара кӑмӑл пусӑрӑнать, ачасен – пушшех те. Витаминсемпе пуян лайӑх пахча ҫимӗҫ чылайччен упранаймасть. Вӗсене упранма уйрӑм условисем кирлӗ.

**– Ҫӗр улмин хӑш сорчӗсене килӗштеретӗр?**

– Пирӗн ҫемьен чи юратнӑ сорчӗ – Импала. Хӗрлӗ хупӑллӑ Розамундӑпа Рокона та юрататпӑр. Эпир вӗсене улӑштарсах тӑратпӑр, анчах та ҫулсеренех виҫӗ сортран кая мар лартатпӑр. Крахмаллӑ сортсем кӑмӑла каяҫҫӗ. Импала – тӑрӑхларах ҫӗр улми, куҫӗсем пӗчӗк, чӑмӑрла пӗҫерсе ҫиме уйрӑмах тутлӑ.

**– Шӑварнӑ пулсан ялта шыв пур ӗнтӗ?**

– 1994 ҫултах, хам колхоз председателӗ чухнех, яла шыв кӗртнӗччӗ. Унччен вара Константин Ивановӑн «Нарспи» поэминчи пек ялӗпех кӗвентепе ҫӑла утнӑ. Кайса килме – пӗр ҫухрӑм. Ӗҫме те, выльӑх-чӗрлӗх валли те, мунча хутма та унтанах йӑтнӑ. Халӗ, паллах, йӑлтах урӑхла.

**– Мӗнле-ха эсир, электрика вӗреннӗскер, агроном пулса тӑнӑ?**

– Килтен виҫӗ ҫухрӑмра вырнаҫнӑ сакӑр ҫул вӗренмелли шкулта ӑс пухнӑ. Вӑтам пӗлӳ илме вара Шупашкара е ҫичӗ ҫухрӑмра вырнаҫнӑ шкула каймаллаччӗ. Ҫемьепе канашларӑмӑр, професси илсен вырӑнларах пулӗ тесе энергетика техникумне вӗренме кӗтӗм. Салтакран таврӑнсан, тӗпкӗч пулнӑ май, аннене пулӑшма тӑван килех юлтӑм. Ачалӑхри ҫуртах ку. Ҫӗнӗрен сӑрласа тӑнӑ кӑна.

Халӗ кунта аппа пурӑнать (Раиса – пенсире), ҫурта вара ман ҫине ҫырнӑ. Газ кӗртнӗ чух вырӑс кӑмакине хӑвартӑмӑр. Кунта манӑн чун канать. Тепӗр чух, канмалли кунсенче, пурте пухӑнатпӑр: тӑвата аппа, икӗ пичче, ачасем. Пысӑк ҫемье. Телейлӗ пулма тата мӗн кирлӗ? Кӑмакаран пиҫсе тухакан кукӑль шӑрши ялӗпех сарӑлать. Килти кукӑле, тин кӑна пиҫсе тухнӑскере, питӗ юрататӑп. Кунтах – ялти чӑнчӑн мунча. Унсӑр пуҫне чӑх-чӗп, кӑрккасем.

**– Пирӗн республикӑра кӑркка тытсах каймаҫҫӗ. Ӑна пӑхасси йывӑр мар-и?**

– Ҫӑмӑлах мар паллах. Черчен кайӑк вӑл. Уйрӑмах чӗпписем питӗ ачаш. Сӑнаса пӑхсах тӑмалла, кирлӗ пек температурӑра тытмалла, вӑхӑтра апат ҫитермелле. Ашӗ вара тӗлӗнмелле тутлӑ.

**– Ачалӑхран асра юлнӑ самантсене астӑватӑр-и?**

– Шкула Андриян Николаев космонавт килсе кайни асра. Эпир урӑх вӑхӑтра ӳснӗ. Яланах хоккейла вылянӑ, йӗлтӗрпе чупаттӑм. Футболла вылямалли лаптӑк кирек хӑш вӑхӑтра та ҫап-ҫутӑ та яп-якаччӗ. Ҫӗнтерӳ кунӗнче йывӑҫ автоматсемпе тӑни, палӑк уҫни куҫ умӗнчех. Юнашар – шурӑ ҫӳҫлӗ ветерансем. Нимӗнпе танлаштарайми патриотла туйӑм ҫуралнӑччӗ ҫак самантра.

**– Мӗнле йывӑрлӑхсем пулнӑ?**

– Астумастӑп. Йывӑрлӑхсем, паллах, пулаҫҫӗ, анчах та куҫҫуль тӑкмалла мар, тӳсӗмлӗх ҫитермелле, вара йӑлтах пулать! Эпӗ 12 ҫулта чухнех атте ӗмӗрлӗхех куҫне хупрӗ. Нумай чӑтма тивнӗ. Вӗренме 10 ҫухрӑма утнӑ, туп-тулли автобуса сумкӑпа чышӑнмалла пулнӑ. Хулара пире, ял ачисене, прописккӑсӑр талон паман. 2 тенкӗ те 14 пус тӑракан кӑлпасси ҫине пӑхса тӑранаттӑмӑр, пурте ҫапла пурӑннӑ ӗнтӗ. Ял хуҫалӑх ӗҫченӗсен кунне уявланӑ чухне правительство пуҫлӑхӗ Владимир Путин ахальтен ҫапла каламарӗ пуль: «Совет самани вӑхӑтӗнче пурне те нумай туса кӑларнӑ, анчах та лавккасенче тавар ҫитмен. Халӗ сахал кӑларатпӑр, сентресем вара йӑтӑнса лараҫҫӗ». Пӗтӗмпех планламалла, шутламалла, палӑртмалла. Унсӑрӑн ҫакӑрсӑр тӑрса юлма та пулать.

**– Рынок условийӗсенче ял хуҫалӑхӗ патшалӑх пулӑшӑвӗсӗр пурӑнма пултараймасть теҫҫӗ.**

– Ял хуҫалӑхӗнче пурне те укҫапа виҫмелле мар. Банксен ялсенчи кредиторсемпе заемщиксене пулӑшмалла. Пӗтӗмпех укҫапа виҫме пуҫласан мӗн патне ҫитсе тухӑпӑр-ха? Тавар туса кӑларакан тупӑш пирки кӑна шухӑшлама пуҫлать. Мӗнпур майпа тавар хӑй хаклӑхне чакарассишӗн ҫунать. Паллах, кун пек чухне тавар пахалӑхӗ ҫухалать. Ҫакнашкал тӗслӗхсене курма пуҫларӑмӑр та ӗнтӗ.

Раҫҫей президенчӗ эпир хамӑра тивӗҫтерекен техника регламенчӗсем туса хатӗрлеймесен Евросоюзӑннипе усӑ курасса пӗлтернӗччӗ. Кунта питӗ ҫирӗп йӗрке кирлӗ. Сӑмах май, европеецсем пирӗн ҫӗршыва килсен, кӑлпасси тутанса пӑхсан питӗ тӗлӗнеҫҫӗ. Аш шӑрши кӗрет-ҫке, вӗсен шучӗпе вара ун пек пулмалла мар. Америкӑра та, Европӑра та фермерсен йывӑрлӑхӗсем пӗрешкелех. Вӗсен ӗҫне тӑсакан ҫук. Ҫамрӑксем ку ӗҫ питӗ йывӑр пулнине ӑнланаҫҫӗ. Ял хуҫалӑхӗ вӑл – пур ҫӗрте те ял хуҫалӑхӗ. Анчах та ҫав вӑхӑтрах ҫакна каласа хӑвармалла: Европа фермерӗсем Раҫҫейрипе танлаштарсан субсиди 30 хут ытларах илеҫҫӗ.

**– Ял хуҫалӑх ӗҫӗ питӗ йывӑр ӗҫ, ҫавах та эсир 25 ҫултах колхоз председателӗ пулса тӑнӑ.**

– Горбачев пуҫарнӑ демократи тапхӑрӗччӗ. Парти райкомӗ альтернатива мелӗпе колхоз председателӗсене суйлама хушу кӑларнӑччӗ. Виҫӗ ҫынран мана суйласа илчӗҫ... Мӗн тумаллине пӗлменнипе малтанхи виҫӗ кунне ӗҫе те тухманччӗ. Шыраса тупрӗҫ, машинӑпа лартса правление ҫитерчӗҫ. Ӗҫлеме пуҫларӑм вара.

**– Ун чухнех хӑвӑра лидер пек туйнӑ-и? Халӑх хӑвӑр хыҫҫӑн каясса шаннӑ-и?**

– Кун пирки нихӑҫан та шухӑшламан. Хам ӗҫе тунӑ, ҫынсем мана шаннӑ. Ял халӑхӗ ман аттене, тӳрӗ те таса кӑмӑллӑскере, пӗлнӗ. Вӑл вӑхӑтра эпӗ бригадирта ӗҫленӗ. Мӗнлерех ҫын пулни курӑннӑ ӗнтӗ. Ҫавӑ ҫеҫ.

**– Председательте ӗҫлеме мӗнлерехчӗ?**

– Мӗнпур йывӑрлӑха пӑхмасӑр вунӑ ҫул хушшинче хамран мӗн килнине йӑлтах турӑм. Ҫынсем астӑваҫҫӗ. Выльӑх йышӗ те, ашӗ те пулнӑ. Усӑ куракан 100 гектар ҫӗр пуҫне 120-125 центнер аш, 500-600 центнер сӗт туса илнӗ. 90-мӗш ҫулсенче демократи юхӑмӗ аталаннӑ май хуҫалӑхсен ячӗсене улӑштарасси, ял ҫӗрӗсене пайласси, дотацисемпе субсидисене чакарасси пуҫланчӗ. Ун чухне Хресченсен союзӗн председателӗпе Аркадий Петрович Айдакпа хресчен правине хӳтӗлеме пуҫларӑмӑр, хамӑрӑн хаҫат, «Хресчен сасси», тухма пуҫларӗ. Эпир те «революционерсем» пулса тӑтӑмӑр. Каярах Айдак ывӑнни пирки, ун вырӑнне ҫамрӑкки – Игнатьев пурри ҫинчен калаҫма пуҫларӗ. Патшалӑх умне вара ҫивӗч ыйтусем лартаттӑмӑр. Аграри партийӗ йӗркеленчӗ, мана министр ҫумӗ пулма ҫирӗплетрӗҫ. Урӑх ӗҫ пуҫланчӗ.

**– Президент умне ҫивӗч ыйтусем лартакан иккӗмӗш Игнатьев тупӑнсан мӗн тӑватӑр?**

– Эп яланах хӑвӑрӑн интересӑрсене хӳтӗлекен союзсем, пӗрлешӳсем, ассоциацисем тӑвӑр тесе калатӑп. Анчах ҫынсем темшӗн хускаласшӑн мар. Ҫапах та аграри тытӑмне аталантарма, ӑна ҫӗкленме пулӑшакан пуҫаруллӑ ҫамрӑксем тупӑнасса шанатӑп.

(Хамӑр корр.)

## «Ӑнӑҫлӑ партнер» – шанчӑклӑ заемщиксене*

«Раҫҫей ял хуҫалӑх банкӗ» уҫӑ пӗрлешӳ хушма хуҫалӑха аталантарма панӑ кредитсене вӑхӑтра татса пыракан шанчӑклӑ заемщиксем валли «Ӑнӑҫлӑ партнер» ҫӗнӗ программа хута янӑ.

Унпа килӗшӳллӗн хушма хуҫалӑха аталантаракансене лайӑх условисемпе тата ҫӑмӑллатнӑ йӗркепе кредит параҫҫӗ. Заемщикӑн кредит процентӗсене тӳлеме каякан тӑкаксен пӗр пайне саплаштарма патшалӑх та (илнӗ самантри ставка чухлӗ) пулӑшать.

Раҫҫей ял хуҫалӑх банкӗ – Раҫҫей агропромышленность комплексне тивӗҫтерекен тӗп кредит финанс тытӑмӗ. 2000 ҫулта йӗркеленнӗренпе вӑл АПКна кредитлассипе чи пысӑк банксенчен пӗри шутланать. Банк акцийӗсем 100 процентӗпех патшалӑх аллинче, ҫавӑнпа унпа ӗҫлеме те шанчӑклӑ.

## Хисеплӗ ял ӗҫченӗсем, Чӑваш Республикинчи тирпейлекен промышленноҫра вӑй хуракансем!

Акционерсен «Раҫҫей ял хуҫалӑх банкӗ» уҫӑ пӗрлешӗвӗн Чӑваш Енри филиалӗн коллективӗ сире професси уявӗпе саламлать.

Раҫҫей – аграри ҫӗршывӗ, Чӑваш Ен – хресченлӗ Раҫҫейӗн чӗри. Ҫавӑнпа ял хуҫалӑх ӗҫӗ яланах хисеплӗ пулнӑ. Хресченӗн ытӑн алли, ун кулленхи йывӑр ӗҫӗ, ҫӗре юратни, хисеплени экономикӑна кӑна мар, обществӑна та кӑмӑлсипет тӗлӗшпе аталанма пулӑшать. Чӑваш Енре кашни ҫын ҫӗрпе ҫыхӑннӑ. Эпир хамӑр атте-аннене, тӑрӑшуллӑ ӗҫ-хӗле сума сӑватпӑр. Ҫакӑ пире ҫӗршыва ытларах юратма, упрама, унӑн илемлӗхне, пурлӑхне пуянлатма вӑй хушать. Хресчен кӑна хӑй туса илнӗ ҫӑкӑрӑн кашни тӗпренчӗкӗн чӑн-чӑн хакне пӗлет. Ҫанталӑка, пурнӑҫри йывӑр лару-тӑрӑва пӑхмасӑрах эсир нихӑҫан та алӑ усмастӑр, ҫавӑнпа та Раҫҫей ҫӗрӗ сирӗн хул пуҫҫи ҫинче тытӑнса тӑрать тесе калама пултаратпӑр.

Раҫҫей ял хуҫалӑх банкӗнче хресчен шанчӑклӑ та яваплӑ клиент пулнине аван пӗлеҫҫӗ. Енчен те вӑл сӑмах пачӗ пулсан, ӑна тытатех. Ҫавӑнпа эпир патшалӑх шанса панине – ял ҫыннисене йывӑр ӗҫ-хӗлте пулӑшассине – пысӑка хурса хаклатпӑр.

Сире чун-чӗререн ҫирӗп сывлӑх, иксӗлми вӑй-хӑват, телей, савӑнӑҫ, ырлӑх сунатпӑр. Ума лартнӑ тӗллевсене пӗрле пурнӑҫласа пысӑк кӑтартусем патне ҫитӗпӗр.

И. ПИСЬМЕНСКАЯ,
«Раҫҫей ял хуҫалӑх банкӗ» уҫӑ пӗрлешӗвӗн
Чӑваш Енри филиалӗн директорӗ.

ХИСЕП

# Ырă ĕç ывăнтармасть

**Хастар та вашават чун-чĕреллĕ çын Патăрьел районĕнчи «Труд» хуçалăх фермине чылай . Выльăх-чĕрлĕх пăхасси çăмăл мар. Çавна май çамрăксем питех явăçмаççĕ ку ĕçе. «Çапах та аслă ăру пур чухне аптрамастпăр-ха, – тет тĕп зоотехник М.Васильев. – Вĕсем – пирĕн шанчăк».**

### «Килте ларма пултараймастăп»

40 çул такăрлать вăл ферма енне хывнă сукмака. Тивĕçлĕ канăва тухнă пулин те ĕçĕпе сыв пуллашма васкамасть Г.Савельева. Çилтăман-и, юрлă-çумăрлă çанталăк-и – выльăх-чĕрлĕх патне çул тытать.

Тăххăрмĕш класран вĕренсе тухнă хыççăнах кӳлĕннĕ вăл çак ĕçе. Паянхи кунччен «Труд» колхозра мăйракаллă шултра выльăх самăртнă çĕрте вăй хурать. «3-4 уйăхри пăрусене илсе пыраççĕ пирĕн пата, – кăмăллăн калаçать Галина Васильевна. – Эпир вĕсене çулталăк хушши пăхатпăр, виçене 400 килограма çитеретпĕр. Кайран вăкăрсене аш-какая ăсатаççĕ».

Юратса пăхнă выльăха ют алла пама шел тет вăл. «Малтанах, çамрăк чухне, макăрсах ăсататтăм. Унтанпа çĕр-çĕр вăкăр самăртса аш-какая панă. Çавна май хăнăхрăм, çапах та шеллетĕп», – малалла тăсăлать калаçу.

Паян Галина Васильевна ĕçтешĕпе Галина Адикинăпа 70 пуç выльăх пăхать. Паллах, вĕсем еплерех ӳт хушасси апатран килет. Кăçалхи çанталăк йывăрлăхсем кăларса тăратнине пăхмасăрах асăннă хуçалăх выльăх-чĕрлĕхе апатсăр хăвармастех. Çавна май утă ют тăрăхран та илсе килнĕ. Вăкăрсем хальхи вăхăтра талăкра 700 грамм хушăннине пĕлтерчĕ Г.Савельева. Иртнĕ çулсенче виçе ытларах пулнине те палăртрĕ.

Галина Васильевна вунă хутчен «Колхозри чи лайăх пăру пăхакан» ята тивĕçнĕ. Унсăр пуçне çак чысах район шайĕпе те çирĕплетнĕ.

Ĕçри çитĕнӳсемшĕн темиçе хутчен те хисеп хучĕсемпе, парнесемпе чысланă ăна. Çавăн пекех Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, ВДНХ кĕмĕл медалĕпе наградăланă. Чи сумли вара – «Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ятпа чыслани. Паллах, чыс-хисеп тӳперен ӳкмест. Ентешĕм ăна ĕçре тупнă. Ахальтен мар зонăри тата пĕтĕм Раççейри конкурссене хутшăнса малти вырăнсене çĕнсе илме пултарнă. «Маларах ĕç çыннине ытларах хисеплетчĕç, – пĕр савăнса, пĕр пăшăрханса пĕлтерет вăл. – Ара, фермăра вăй хурсах туристсен путевкипе тĕнче курса çӳрерĕм. Самана улшăннă май ял ĕçченĕн ячĕ те çухалчĕ».

Выльăх-чĕрлĕхе юратасси ăна амăшĕнчен Анисия Яковлевнăран куçнă пулĕ. Вăл 40 çула яхăн ветеринар пулса ĕçленĕ. Пĕр вăхăт ферма заведующийĕнче те вăй хунă. «Нăрваш Шăхаль ялĕн тава тивĕçлĕ колхозници» ята тивĕçнĕ. Сăмах май, Савельевсен Гена ывăлĕ те хăйĕн кун-çулне ферма ĕçĕпе çыхăнтарнă. Малтанах вăл аппăшĕпе пĕрле мăйракаллă шултра выльăх самăртнă çĕрте ĕçленĕ. Паян вара – ферма заведующийĕ.

«Килте ларма пултараймастăп, – тет ултă теçеткене çывхаракан Г.Савельева. – Хăнăхнă ĕç еннех утас килет. Унсăрăн чунра та пушă».

Паян пĕчченех кун кунлать вăл. Кичемлĕхе сирме выльăх усрать, пахча çимĕç çитĕнтерет. Юратнă ĕç пурришĕн савăнать. Ара, ырă ĕç ывăнтармасть тени тĕрĕсех çав.

### Туслă мăшăр



Никитинсем

Никитинсем çемье подрячĕпе çирĕм çул ытла пушмак пăру пăхаççĕ. Туслă мăшăр ĕçре те, килте те пĕрле.

Мария Сергеевна маларах дояркăра ĕçленĕ пулсан, Владимир Егорович – скотникре. «Труд» ял хуçалăх фермине иккĕшĕ те çамрăклах пырса кĕнĕ. Кунтах пĕр-пĕрне тупнă, юратса пĕрлешнĕ. Çавна май ачисем те шкул хыççăн ашшĕ-амăшне пулăшма çырма урлă фермăна чупнă. Туслă мăшăр тĕпренчĕкĕсене те ĕçе юратма вĕрентсе ӳстернĕ. Çавăнпах ĕнтĕ кĕçĕн Никитинсем те пултаруллă та маттур çитĕннĕ.

Владимир Егоровичпа Мария Сергеевна хальхи вăхăтра 78 пăру пăхаççĕ. «Тĕрлĕрен пулать, тепĕр чухне 90 пуçа та çитет, – тет кил хуçи хĕрарăмĕ. – Маларах çак ĕçре 4 çын вăй хунă. Çемье подрячĕ йĕркелесен пире шанса пачĕç».

Паллах, шаннă ĕçе тӳрре кăларма тăрăшаççĕ Никитинсем. Хăть хăçан та вĕсен выльăх-чĕрлĕхĕ тутă та таса.

«Çемье подрячĕпе ĕçлеме меллĕрех, – малалла тăсăлать калаçу. – Пĕр-пĕрне çур сăмахранах ăнланатпăр».

Çитĕннĕ «пушмаксене», пăрулама вăхăт çитсен, тепĕр витене куçараççĕ, урăх çын аллине параççĕ. «Килти выльăхран та хаклăрах вĕсем, – ăшшăн пуплет М.Никитина. – Ĕçе пырса кĕрсенех сăнаççĕ, сас парсан вара – тăраççĕ. Калаçуранах палласçĕ пире».

Ĕç условийĕсем çулсеренех çăмăлланса пыни савăнтарать ăна. «Ĕлĕкхи пек пулсан ĕçлес те çук халĕ фермăра, – тет вăл. – Хире выльăх апачĕ илме çӳреттĕмĕр. Пĕр çулхине, çуркуннене хирĕç, йĕтем çинчи хуралтăн улăм тăррине сӳтме тивнĕччĕ».

Ял çыннин пурнăçĕ хăçан çăмăл пулнă-ши вăл? Ĕçре пилĕк авнă хыççăн килте те картиш тулли выльăх-чĕрлĕх кĕтет ăна. Çапла, ĕни-сурăхне те, хур-кăвакалне те çителĕклĕ тытаççĕ Никитинсем. Унсăр пуçне 2 гектара яхăн çĕр пур вĕсен. Унта çемйипех ĕçлеççĕ, ачисем те пулăшаççĕ. Туслă мăшăр 5 ача çитĕнтернĕ, тăваттăшĕ хăйсем йăва çавăрнă. Çапах та ашшĕ-амăшне пулăшсах тăраççĕ. Ахальтен мар пурте яла юлнă-çке. Пахча çимĕç ӳстерсе те тупăш илеççĕ Никитинсем. Кăçал, сăмахран, çĕр улми те ăнăçлă çитĕннĕ вĕсен.

Ял ĕçчен çынна килĕштерет. Тирпейлĕ те хăтлă кил-çуртра пурăнаççĕ Владимир Егоровичпа Мария Сергеевна. Çитес çул пĕрлешнĕренпе 40 çул çитнине уявлĕç вĕсем. Çапла, 40 çул пĕрле колхоз фермине утаççĕ, ĕçрен килне таврăнаççĕ. «Çырма урлă каçса çӳресех ватăлтăмăр», – шӳтлет кил хуçи хĕрарăмĕ çемье çинчен калаçу пуçарнă май. 18 çултах качча тухнă иккен вăл. «Çакăншăн пĕрре те пăшăрханмастăп, – тет 58 çула çывхаракан хĕрарăм. – Манпа юнашар яланах – шанчăклă та маттур арçын. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе, тату пурăнатпăр. Хĕрарăм телейĕ упăшкаран килет».

Ачасем сума суни, ĕçтешсем хисеплени, ырă-сывă пурăнни телей мар-и вара? Унран сумлăраххи, хаклăраххи тупас çук ах çĕр çинче.

В.ПЕТРОВА.





С.Журавлев сăн ӳкерчĕкĕсем

# Кĕр кĕрекинче

№Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.№.

Районти ĕç укçи шайĕ республикăри вăтам кăтартуран 25 процент таран пĕчĕк пулни тата тăрăшарах ĕçлеме хистенине палăртрĕ. Выльăх апатне çĕр проценчĕпех пурнăçланă хуçалăхсем те сахал мар. Вырăнта çитменнине ытти региона тухса хатĕрленĕ. Халĕ те, ĕçрен пушаннă май, выльăх апачĕ кӳрсе килме кая юлман-ха. Президент выльăх-чĕрлĕх отраслне аталантарас тĕлĕшпе çĕр çывăрмасăр тенĕ пек тăрăшнă «Новый путь» хуçалăх ертӳçине Иван Игнатьева уйрăммăн тав турĕ: «Иван Николаевич канмасăр ĕçлени, кашни кун пуçне ватни сисĕнет. Выльăх-чĕрлĕх отраслĕ куллен укçа кӳрекен çăл куç вырăнĕнчех. Сĕт хакĕ те йĕркеленчĕ».

Республика пуçлăхĕ ĕçре уйрăмах палăрнисене патшалăх наградисем пачĕ. «Новый путь» хуçалăхри Светлана Клементьева сысна ĕрчетекенпе «Звезда» хуçалăхри Алексей Сергеев механизатор тав хучĕпе парнесене тивĕçрĕç. Ял хуçалăх министерствин хисеп хучĕсене вара «Журавлев» хресченпе фермер хуçалăхĕнчи Альберт Архипов механизатора, «Правда» хуçалăхăн склад заведующине Алексей Быкова, «Алмаз» пĕрлешĕвĕн электрогазосварщикне Николай Макарова тата Ульянов ячĕллĕ хуçалăхри Валентина Пшанкова дояркăна пачĕç.

### Çимелĕх те, сутлăх та

Шĕмшеш ял тăрăхне кĕрекен Кăраклав ялĕнчен килнĕ Анатолипе Альбина Семеновсен хресченпе фермер хуçалăхĕ чылайранпа сысна ĕрчетессипе ĕçлет. Ял халăхне кăна мар, таврарисене те сысна çурисемпе тивĕçтереççĕ. Хăйсен кил-йышĕпех 10 гектар çĕр çинче ĕçлесе ĕлкĕреççĕ. Вĕллесем те тытаççĕ. Пыл сутаççĕ. Виçĕ литрлă пыл банки 1200 тенкĕ кăна. 7-8 пуçран кая мар ĕне выльăх тытаççĕ. Чылай чухне сĕтне сысна çурисемех çисе яраççĕ. Çак тăрăхранах килнĕ Валентина Матвеева вара, мăшăрĕпе виçĕ ĕне тытаканскер, кунсерен сĕт пама флягăпах тухатăп тет. Курăк килти выльăха çитерме кăна мар, сутлăх та пур. Ĕçлесен пулать, паллах. Çимелĕх те, сутлăх та.

Сăмах май, Михаил Игнатьев çакна пĕлтерчĕ:

– Мускавра иртнĕ «Ылтăн кĕркунне» ярмăрккара чăвашсем хăйсен продукцийĕшĕн 46 медаль çĕнсе илчĕç, вăл шутран 30-ăшĕ – ылтăнни. Таса та паха апат-çимĕç туса илни вăл – пысăк çитĕнӳ. Çакăнпа пирĕн мухтанмалла.

Ял çыннин пурнăçĕ çăмăл мар, нумай ĕçлемелле. Тăрăшуллă пулсан нӳхреп те, тĕп сакай та тулли пулать. Элĕксем пӳлмене тултарнă тесе хуравларĕç. Çĕр улми те, пахча çимĕç те хĕл каçма çителĕклĕ хатĕрленĕ. Ырлăх-сывлăх сире, çĕр ĕçченĕсем!

Е.НИКОЛАЕВА.

**Николай Кириллович Кириллов – Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн ректорĕ, ветеринари наукисен докторĕ, профессор. Вăрнар районĕнчи Авруй ялĕнче пысăк çемьере ӳснĕ. Шкул хыççăн Вăрнарти совхоз-техникумра ветеринар пулма вĕреннĕ. Совет çарĕнче службăра тăнă. Пăрачкав районĕнче фельдшерта ĕçлесе пăхсан малалла ăс пухма шут тытнă, Хусанти Н.Э.Бауман ячĕллĕ ветеринари институтĕнчен «пиллĕк» паллăсемпе çеç вĕренсе тухнă. Аспирантурăра вĕренсе наука кандидачĕн диссертацине хӳтĕлесен тăван республикăна таврăннă. 1980 çултанпа ял хуçалăх академийĕнче, çирĕм çула яхăн – ректор ĕçĕнче.**

**Çак çулсенче Н.К.Кириллов биологипе ветеринари наукисене пысăк витĕм кӳнĕ, 300 ытла наука ĕçĕ, 36 монографи, чылай вĕрентӳ пособийĕ çырса хатĕрленĕ.**

**Паян вăл пирĕн хаçат хăни. Сăмах-юмахăмăр, паллах, ял хуçалăхĕн ĕнерхи, паянхи ĕçĕ-хĕлĕпе пуласлăхĕ пирки.**



# «Пĕр шухăшлă çынсем пулсан...»



В.Филиппов сăн ӳкерчĕкĕ

## ĔНЕР

**– Николай Кириллович, совет саманинче пирĕн пĕтĕм экономика плана пăхăнса тăратчĕ: çапла акаттăмăр, пуçтараттăмăр, патшалăх пӳлмине ăсататтăмăр. Шӳтлерех каласан, планпа вăранаттăмăр, унпах çывăрма выртаттăмăр.**

– Ятарлă план кирлех. Анчах вăл ĕçлекеншĕн пулмалла, пуçлăхсемшĕн мар. Эпир лайăххинчен япăххине хăвăрт куçатпăр вĕт. План çырсассăн ăна – хăть вилсе кай – пурнăçла. Çаплаччĕ ĕлĕк. Тĕрĕссипе, кашни çемье хăйĕн планĕпе пурăнать: кăçал кама пальто илсе памалла, кама – атă-пушмак, теприне кивелсех кайманнине çĕнетсе памалла... Эпир пысăк производствăра пурте хăйне хальлĕн пулса пырĕ тетпĕр. Ун пек пулма пултараймасть. План пулсан эпĕ ыран, тепĕр кун, çитес эрнере, çитес уйăхра е çулталăкра мĕн тумаллине янкăр курса тăратăп. Çавăнпа та – тепре калатăп – кирлех вăл планлани.

**– Анчах та ял хуçалăхĕнче условисем пурин те пĕр мар. Акă Чăваш Енех илер. Кирлех-ши кашни районтах пĕрешкел тырă-пулă ӳстерни, выльăх-чĕрлĕх çитĕнтерни?**

– Килĕшмелле кунпа. Анчах эпир пĕр-пĕринпе ĕçлеме пĕлместпĕр. Акă, калăпăр, пирĕн паян выльăх апачĕ хатĕрлесси питĕ пĕчĕк шайра. Унăн пахалăхĕ япăх. Комбикорм туса кăларакан пысăк предприятисем рецептурăна пăхăнмасăр хăйсен продукцине темĕн те пĕр хушаççĕ: пурă та пур унта, ытти япала та... Çакă апатăн пахалăхне ӳстермест. Выльăх ĕрчетекенсем кунашкал комбикорма илме хăраççĕ, çавăнпа та хăйсен хатĕрлеме тивет ăна.

Астăватăр-и, совет саманинче пысăк сысна комплексĕсем тума тытăннăччĕ. Вун пĕре вун иккĕччĕ вĕсем Чăваш Республикинче... Вĕсене ытти хуçалăхăн апатпа тивĕçтермеллеччĕ. Рынок самани пуçлансан выльăх апачĕ хатĕрлекенсем ăна комплекссене мар, аякка хаклăрах хакпа сутма пуçларĕç. Мĕн кăтартать çак тĕслĕх? Пирĕн хуçалăхсем пĕр-пĕринпе çыхăнса, пĕр-пĕрне пулăшса ĕçлеме пĕлмеççĕ. Эпир çавăн пек вĕт: мĕн те пулин тăвас тăк, чи малтан хамăр хăвăрт тупăш илесси çинчен шутлатпăр, услама хамăр кĕсьене çеç хурасшăн.

Паянлăха тупăшĕ пулĕ-ха, анчах малашлăх çинчен шутласа çак тыр-пул туса илекенсен, выльăх-чĕрлĕх çитĕнтерекенсен, выльăх апачĕ хатĕрлекенсен пĕр чăмăрта, пĕр ассоциацире пулмалла. Çавăн чухне çеç эпир кама мĕн, мĕн чухлĕ кирлине пĕлсе, пĕр-пĕрне итлесе, пулăшса ĕçлеме пултарăттăмăр. Хальхи пек ăçта хаклăрах илеççĕ, çавăнта сутсассăн выльăха апатсăр хăварас хăрушлăх пур. Кăçалхи шăрăх çу хыççăн шăпах çапла пулса тухма пултарать те.

**– Эпир çут çанталăк панă ырлăхпа – çĕрпе-шывпа – чиперех усă курма пĕлетпĕр-и? Экологи тĕлĕшĕнчен халĕ те суха пуçпа ĕçлени лайăхах пулĕ-ха...**

– Раççейре аллă процент таран хура тăпраллă çĕр шутланать. Эпир вара гектартан çирĕм центнер тырă илетпĕр. Танлаштарса пăхар Германипе. Унта хура тăпраллă çĕр çук та темелле, анчах вĕсем гектар пуçне утмăл центнер илеççĕ. Çавăнпа тыр-пул туса илнĕ çĕрте – кунта тыррине те, çĕр улмине те, ытти ӳсен-тăрана та кĕртетĕп эпĕ – çĕр пахалăхне шута илес пулать, паллах, анчах та çав вăхăтрах çĕнĕ техникăпа, технологипе усă курмалла. Çапла майпа çеç эпир тыр-пул тухăçлăхне ӳстерме пултарăпăр. Калăпăр, хамăр республикăра çак технологи йĕркине çирĕп пăхăнса пырсассăн пĕр гектартан вăтăр центнер тырă туса илесси йывăр ĕçех мар. Эпир вара ыттисене пăхса çӳретпĕр те паян пĕр тĕрлĕ тăватпăр, ыран – тепĕр тĕрлĕ. Технологипе ĕçлеме вĕренес тĕк, ăна сахалтан та пилĕк çул пăхăнса пырас пулать. Кашни ĕçĕн хăйĕн йĕрки-курки пур вĕт.

## ПАЯН

**– Çакна пĕлес килет, Николай Кириллович: пирĕн енче чылай колхоз-совхоз арканчĕ, тен, эпир ушкăнпа ĕçлеме юратакан халăх мар...**

– Ушкăнпа ĕçлеме колхозсем вĕрентмен пирĕн халăха. Пирĕн авалтанах çĕр хуçисем пулнă – князьсем, помещиксем, мăнастирсем, общинăсем... Хресчен вĕсенчен çĕре арендăна илнĕ, çав çĕршĕн тӳлесе ун çинче ĕçлесе пурăннă. Халĕ те çавăн пекех пулса тухать. Фермерсене, хуçалăхĕ аталанса пынă май, ĕçлекенсем кирлĕ. Вара вĕсем хăйсем тĕллĕн ĕçлейменнисене тара тытаççĕ. Акă, курăр-ха, ялта, хушма хуçалăхра пурин те пĕр тан çĕр. Анчах та ĕçĕ-хĕлĕ пĕр пек пулса пымасть. Юнашар пахчасенчех, хуçине кура, пахча çимĕç тĕрлĕрен ӳсет: пĕрин паха, теприн – аран-аран.

Тепĕренчен, пирĕн фермерсем те тĕрлĕрен. Акă эпир 90-мĕш çулсенчен пуçласа пĕчĕк тракторсемпе ĕçлеме хистетпĕр вĕсене. Çав вăхăтрах Америка фермерĕсене 1968 çултанпах çавнашкал тракторсемпе ĕçлеме чарнă. Саккунпах. Лаша вăйĕнчен пĕчĕкрех вăйлă тракторсемпе ял хуçалăхĕнче усă курмаççĕ. Эпир вара мини-трактор кирлĕ тесе шавласа çӳретпĕр. МТЗ-80 тракторпа, пирĕн патра ĕçлекеннипе, Америкăра усă курмаççĕ. Унта вăйлă тракторсем анчах ĕçлеççĕ, çавăнпа вĕсен тухăçлăхĕ те пысăк.

Ĕне выльăх комплексĕсене илер тата. Паян кун Америкăра пĕтĕм сĕтĕн 70 процентне 500-е унран ытларах ĕнеллĕ комплекссенче туса илеççĕ. Эпир вара 200 ĕнеллĕ комплекссенче 36 процент таран сĕт илетпĕр. Пирĕн пысăк комплекссем çук. Халь çĕнĕ йĕркепе тума тытăнчĕç. Çынна яланах шанма çук: вăл йăнăш тума, манса кайма пултарать. Çĕнĕ комплекссенче автоматсем ĕçлеççĕ. Акă Çĕрпӳ районĕнче сысна комплексĕ турĕç. Унта çын кĕрсе çӳремест, йăлтах автоматика: вăхăтра шывне, апатне парать, тасатать...

**– Çулла Самар енне кайса килнĕччĕ. Çул тăршшĕпех пушанса юлнă ферма «кĕлеткисем» лараççĕ, масар çинчи пек. Ытла хăрушшăн курăнаççĕ-çке. Темле арканнă планетăна пырса çакланнă пекех туйрăм хама. Тен, чăнах та пăсмалла вĕсене?**

– Сӳтме-пăсма та укçа-тенкĕ кирлĕ-çке... Эпир çав тери идеологие пăхăнса пурăнакан халăх. Пире пысăк комплекссем тумалла тесе каларĕç – эпир тӳрех пысăкран та пысăкки тума тытăнатпăр. Акă Тутарстанра пилĕк пин ĕне усрамалăх комплекссем лартма пуçларĕç. Кăçалхи пек апатсăр юлсан мĕн пулĕ ĕнтĕ çакăн пек пысăк комплекссенче? Чăваш Республикинче, ман шутпа, пĕр комплексра 400-600 сăвакан ĕне пулсан çителĕклĕ. Ытларах пулсан каллех таçта аякра апат шырас пулать вĕсем валли. Çавăнпа ĕçе çӳлтен хистенипе мар, пурнăç ыйтнипе туса пымалла. Каларăм ĕнтĕ, пирĕн выльăх апачĕ нумай енĕпе выльăх организмне тивĕçтереймест. Апата вĕтетсе пани кăна çителĕксĕр. Унта тĕрлĕ макро-микроорганизмсем кирлĕ. Выльăх этем паракан апатăн 60-62 процентĕпе кăна усă курать, ытти – хывăх. Калăпăр, виçĕ кило апат парсан иккĕшĕ усса каять, пĕри ахалех пулать. Ку вăл апата кăлăхах пĕтерни çеç. Паян чылай çĕршывра микронизаци текен процесс пырать. Акă сыснана çĕр улмипе çеç тăрантни – япăх япала. Унта крахмал нумай. Крахмал – полисахарид, унăн молекулисем питĕ пысăк. Сысна организмне кĕрсен унăн арканмалла-çке-ха – глюкоза таранах, мĕншĕн тесен глюкоза çеç выльăх юнне куçма пултарать. Полисахарид – пысăккине кура – организмра глюкоза таран арканма ĕлкĕреймест. Çавăнпа ĕçлеме вĕреннĕ çынсем кирлĕ. Хамăр ӳстернĕ тыр-пулпа çĕр процент таранах усă курма пĕлмелле, тутлăхлă япаласене ахаль сая ямалла мар. Наукăн ку тĕлĕшпе малалла шухăшламалла, çынсене лайăхрах ĕçлеме майсем туса памалла.

## ЫРАН

**– Сирĕн академи шăпах çакăн пек специалистсене вĕрентсе кăларать.**

– Студентсем çĕнĕ техникăпа технологи пулсан вĕренме те, ĕçлеме те хатĕр. Пирĕн академи юлашки çулсенче вĕр çĕнĕ техника чылай туянчĕ, лабораторисене çĕнетрĕ. Пур çĕрте те – кашни кафедрăн – компьютер класĕсем пур. Анчах нимĕнле оборудовани те, лайăх вĕрентекен пулмасан, çынна ăс параймĕ. Хальхи вăхăтра академире вĕрентекенсен 70 процентĕн наука званийĕ пур, вĕсенчен 15 проценчĕ – профессорсем.

Пирĕн пата нумай пулмасть Раççей Патшалăх Думин депутачĕ Константин Косачев килсе курчĕ. Вăл, ют çĕршывсемпе çыхăнса ĕçлекен комитета ертсе пынă май, епле çĕршывра кăна пулса курман пулĕ. Анчах кунта килсен питĕ тĕлĕнчĕ, нихçан та ял хуçалăх академийĕнче çакăн пек лайăх вĕрентеççĕ тесе шутламан терĕ. Халь ăнланатăп ĕнтĕ çĕршыв модернизацийĕ мĕнле пымаллине терĕ. Çапла, пĕр шухăшлă çынсем пулсан ĕçĕ те пулать.

**– Тепĕр ыйту, Николай Кириллович. Ман шутпа, этем мĕн чухлĕ ăсланса пырать, çавăн чухлĕ хăйне сиен кӳрет. Мĕншĕн çапла калатăп-ха? Хамăр çиекен апата пăхсан та мĕн кăна тупмастпăр унта – пестицид та, ытти химикат та... Этемлĕх хăйне хăй пĕтерме шут тытнă тейĕн...**

– Çĕр чăмăрĕн лаптăкĕ ӳсмест вĕт. Çынпа çын пĕр-пĕрне улталаса пурăнни пĕтерет. Çын вăл – çав выльăхах, унăн организмĕ нимĕнпе те уйрăлса тăмасть выльăхăннинчен. Акă каларăм-çке-ха комбикорм пирки. Унта мĕн чухлĕ кирлĕ-кирлĕ маррине хушмаççĕ пулĕ – улталаса сутма, услам тума. Нумайăшĕ хăйĕн продукцийĕ çинчен суйса çырать. Унта вара 60 проценчĕ – соя, çирĕм проценчĕ – куккурус, ытти – тутлă шăршăпа тутă паракан, куçа илĕртекен хутăш. Пĕчĕк суя пысăкултав патне илсе çитерме пултарать. Ку чăнах та этемлĕхшĕн пысăк хăрушлăх. Анчах та çыннăн инстинкт текенни пур. Шалти сыхлав. Пирĕн ăру хыççăн килекеннисем пире кура ăнланĕç-ха малашне мĕнле пурăнмаллине. Çакна шанас килет.

**– Тавтапуç, Николай Кириллович, тĕл пулса калаçма вăхăт тупнăшăн.**

– Хăвăра тав. Çак самантпа усă курса республикăри ял хуçалăх ĕçченĕсене уяв ячĕпе чунтан саламлас килет. Пурнăç уссине, пурнăç илемне асăрхама ан манăр тесшĕн эпĕ пурне те.

Т.ИЛЬИНА.

ÇĔРШЫВРА, ТĔНЧЕРЕ...

# «Буш урисем» пирĕн чăхсене таптаççĕ



**Раççей Америка чăхне туянма ирĕк панăранпа хамăрăн чăх-чĕпе вырнаçтарма йывăр. Аграри маркетингне тĕпчекен институт пĕлтернĕ тăрăх аш тирпейлекенсем хамăрăнне туянма пăрахнă – океан леш енчи йӳнĕрех. Çитес вăхăтра лару-тăру, тен, улшăнма та пултарĕ. 2011 çултан Раççейре шăнтнă чăха тирпейлеме чараççĕ. Ют çĕршывран кӳрсе килекенни вара шăпах çавăн пекки.**

Чăх-чĕп ĕрчетекенсем «Буш урисем» таврăнасран ахальтен хăраман. Йӳнĕ хака пула (импорт 5-10% йӳнĕрех) американецсем вырăнти продукцие хĕссе кăларса Раççейре хăйсене хуçа пек туяççĕ. Çитменнине ку тата хăйне майлă рынок. 90-мĕш çулсенче океан леш енчен «вĕçсе килнĕ» чăх тукмаккисене ахаль çынсем туяннă пулсан, халĕ – тирпейлекен компанисем. Вĕсемшĕн продукци хакĕ пĕрремĕш вырăнта-çке-ха. Чăх-чĕп ашне кирек ăçта та хушаççĕ: доктор кăлпассийĕнчен пуçласа пельмень таранах.

Америка чăхне хăйĕн çĕршывне «хăваласа» яма пулĕ-ши? Мускав Пĕтĕм тĕнчери суту-илӳ организацине (ВТО) кĕрессипирки калаçусем ирттерет. Ку тĕлĕшпе чи пысăк йывăрлăх кăларса тăратаканĕ вара – ял хуçалăхĕ. «Буш урисене» Раççейрен хăвалаканĕ те – потребнадзор ертӳçи Геннадий Онищенко – нумаях пулмасть пирĕн рынока килекен Америка чăххи Раççей стандартне туллин тивĕçтерет тесе палăртнă. Астăватăр пулĕ, чăх какайне хлор шĕвекĕпе сĕрме чарнăччĕ вăл.

Анчах та Калифорнипе Техасра чăх-чĕп ĕрчетекенсен савăнма иртерех-ха. Çитес çултан Раççейре çимелли продукци хатĕрленĕ чухне шăнтнă чăхпа усă курма чараççĕ (Раççей потребнадзорĕ кирлĕ документсене алă пусса çирĕплетнĕ те ĕнтĕ). Пирĕн аш-какай комбиначĕсем вара шăпах унпа усă кураççĕ. Раççей статистикин кăтартăвĕсем тăрăх хамăр çĕршывра туса илекен чăх какайĕн 40 проценчĕ шăнтнă продукци. Импорт «ури» вара 100 процентчĕпех – шăнтни.

Аш-какай тирпейлекенсем, паллах, чарупа кăмăлсăр. Чиновниксене çак чарăва улăштарма ыйтаççĕ. Кăлпасси хакланнисĕр пуçне Беларуçпа Казахстан та пире ăнланмĕç, асăрхаттараççĕ вĕсем. Мĕншĕн тесен Раççей таможня пĕрлешĕвне кĕрекен çĕршывсем хушшинче пĕртен-пĕр çирĕп чикĕлли. Çавăнпа та Орел облаçĕнчи аш-какай комбиначĕ çывăхри Гомельри чĕр тавара та туяймĕ. Америкăри пирки вара калаçмалли те çук. Нацин аш-какай ассоциацийĕнче вара Раççей потребнадзорĕ çирĕплетнĕ йĕрке пекки тĕнчери урăх нихăш çĕршывра та çуккине палăртаççĕ.

# Сывă пул, пĕр пус?

Нумаях пулмасть Патшалăх Думи укçа-тенкĕпе çыхăннă ыйтăва пăхса тухнă. Раççей Тĕп банкĕ депутатсене вак укçана, пĕр пуслăххипе пилĕк пуслăххине, кăларма пăрахма сĕннĕ. Пĕр пуслă укçана çапма хысна 47 пуслăх тăкак курать, пилĕк пуслăххине çапма – 69 пуслăх. Тăкаклă ĕç. Депутатсен сĕнĕвне шута илсе финанс комитечĕ пус укçапа сыв пуллашма килĕшнĕ.

Раççей историйĕнче пус укçана икĕ хутчен пĕтернĕ: Граждан вăрçи вăхăтĕнче тата 1991 çулта. Анчах та вăл кашнинчех каялла таврăннă.

Пус вăл – патшалăх символĕ кăна мар, халăх ăслăлăхĕпе вырăс фольклорĕн пуянлăхĕ те. Раççейре вак укçана хисепленĕ. Пус тенкĕ перекетлет тенĕ. Экспертсем пуса шута хуманни каялла пырса çапма пултарасса асăрхаттараççĕ. Лавккасенче тавар хакĕсене улăштарса çырнă май сутуçăсем, паллах, ытларах хăйсене усă тума тăрăшĕç. Тĕслĕхрен, 66 пус вырăнне 70 пус çырĕç.

Хальлĕхе ыйтăва çурри таран кăна татса панă. Финанс комитечĕн членĕсем укçа çаврăнăшĕнчен пĕр пуса кăларма хирĕç мар, анчах та пилĕк пуслăххинчен мĕнлерех майпа хăтăласси шухăшлаттарать. Çавăнпа та пилĕк пуспа сыв пуллашма иртерех-ха. Малтан вăл пенси, коммуналлă пулăшу тарифĕсене тата налук тӳлевĕсене еплерех витĕм кӳнине тĕпчемелле.

Темшĕн-çке пĕр пуса пилĕк пусран та ытларах шеллетĕн. Пĕр пуспа ĕлĕкрех шăрпăк курупки е пĕр стакан газировка туянма пултарнă. Тĕрĕссипе пусне мар, историне шел. Тен, ăна мĕнле те пулин çăлса хăварма пулать? Икĕ хут çухалнăскер, виççĕмĕшĕнче пуçĕпех çухалĕ-ши ĕнтĕ?



# Туртакансене хĕсĕрлеççĕ

## РАÇÇЕЙРЕ ТАБАКА ХИРĔÇ КĔРЕШЕС ТĔЛĔШПЕ ХĔРӲ ĔÇ ПУÇЛАНАТЬ

**Раççейре транспорт чарăнакан вырăнсенче, кафесемпе ресторансенче табак туртма чараççĕ. Пирус мăкăрлантаракансен хисепне 40 процентран 25 процент таран чакарма палăртаççĕ. Владимир Путин премьер-министр 2010-2015 çулсенче табака хирĕç кĕрешмелли наци концепцине алă пуснă.**

РФ Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерстви çак документа тахçанах кĕтнĕ. Табака хирĕç кĕрешес ĕç çăмăлах пулмĕ. Асăннă министерствăн ертӳçи Татьяна Голикова пĕлтернĕ тăрăх Раççейре пурăнакансен 40 проценчĕ туртать, ку вăл – 44 миллион çын. Сигарет тĕтĕмĕн сиенĕ вара граждансен 80 процентне пырса тивет. Тĕп тĕллев халĕ – пирус туртакансемпе унăн шăршине ирĕксĕрех сывлама тивекенсен йышне чакарасси. Анчах шухăшланине пурнăçа кĕртес тесен табака питĕ хаклă тума, туртнине вара киревсĕр ĕç пек кăтартма тивет.

Çывăх вăхăтрах табак хакне Евросоюз çĕршывĕсенчи вăтам хак шайне çитересшĕн. Урăхла каласан 50 тенкĕрен йӳнĕрех сигарет пулмалла мар. Апла туртакансем (ĕçекенсем те ĕнтĕ) сывă пурнăç йĕрки тытса пыракансемпе танлаштарсан бюджет тӳпине ытларах витĕм кӳреççĕ пек пулса тухать.

Хитре курупкаллă пирус пачкине курса туртас килмен çĕртенех туянасран табака ятарлă суту-илӳ вырăнĕсенче кăна сутмалла тăваççĕ. Мĕнле пулĕ çакă – хальлĕхе паллă мар.

«Вунă пачка пирус туянатăн та хваттер выляса илетĕн» йышши рекламăсем малашне пулмĕç. Туянакана табак пирки «çăмăл» е «питĕ çăмăл» тесе улталасси те çухалать. Ачасемпе çул çитменнисене табак сиенĕ çинчен ăнлантарасси, асăрхаттарасси тĕп ĕçсенчен пĕри пулмалла. Табак туса кăларакансене вара илĕртӳллĕ курупка çине никотинпа арканнă этем органĕсене вырнаçтарма хушĕç.

Туртаканшăн тĕтĕм мăкăрлантарасси те киленĕç пулмĕ. Хăтлăх тени çухалать. Обществăлла апатлану тата кану вырăнĕсенче туртма чараççĕ. Паллах, пĕр кун хушшинче мар. Куçăм тапхăрĕнче (унăн вăхăтне палăртĕç) вентиляци тытăмĕ вырнаçтарнă уйрăм вырăнта туртакансене пирус мăкăрлантарма чармĕç-ха. Чарăнусенче тата мĕнпур обществăлла транспортра вара тĕтĕм шăрши-марши пулмалла мар. Америкăн чылай штатĕнче çак нашкал йĕрке йăлана кĕнĕ те ĕнтĕ. Вашингтонра тата ытти хăш-пĕр штатра урамра та йĕркеллĕ туртаймастăн. Туртасах тесен çуртран 20 метр аяккарах каймалла.

# Çĕнĕлĕхе епле йышăнатăр?

**Максим Королев,** «Вырăс табакĕ» информ-агентство ертӳçи:

– Ку документра мĕнле мерăсене хăш тапхăрта йышăнмаллине палăртнă. Анчах та концепцие пурнăçланă чухне мĕнле саккунсем йышăнни те пĕлтерĕшлĕ. Малтанхи тӳрлетӳре 50 тăваткăл метртан пĕчĕкрех пӳлĕмре табак изделийĕсене сутма чарнăччĕ. Халĕ юрать кунашкал йĕрке çук. Унсăрăн табакпа суту-илӳ тăвакан пин-пин пĕчĕк предприяти çука юлатчĕ.

**Дарья Халтурина,** Раççейри табака хирĕç кĕрешекен коалици ертӳçин çумĕ:

– Раççей табак туртассипе тĕнчере пĕрремĕш вырăнта тăрать. Документ мал туртăмлă. Премьер çирĕплетнĕ концепци саккун улшăнăвĕсене витĕм кӳрессе, вăл шутра табак хакĕ ӳсессе, табак индустрийĕ хăйĕн интересĕсене хӳтĕлессишĕн ырă пуçарăва ура хумасса шанас килет.

# Табак вăрçи

Раççей табака хирĕç кĕрешес енĕпе пирвайхи утăм тăвать пулсан, аталаннă çĕршывсенче ку тĕлĕшпе чăн-чăн вăрçă пырать. Финляндире, тĕслĕхрен, 18 çултан çамрăкрах ачасене табак сутма кăна мар, ахаль пама та юрамасть. Йĕркене пăсакансене штрафлаççĕ, тĕрмене хупма та пултараççĕ. Японире октябрĕн 1-мĕшĕнчен пирус хакĕ 40 процент çĕкленнĕ. Пирус пачкин вăтам хакĕ 3 доллартан 5 доллара çитнĕ. Вырăнти хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх туртакансем йывăр вăхăта лайăх хатĕрленнĕ. Вĕсем малтанах кивĕ хакпа темĕн чухлĕ табак туянса хунă. Халĕ ăна хăвачĕ пĕтесрен холодильникра упраççĕ.

Пирус пачкин вăтам хакĕ




# ЧИ ПĔЧĔК ĔÇ УКÇИ – ХРЕСЧЕНĔН, ЧИ ПЫСĂККИ – ФИНАНСИСТСЕН

**Статистика Раççейре финанс тытăмĕнче ĕçлекенсем чи пысăк ĕç укçи илнине палăртать.**

**Финансистсем уйăхне вăтамран 50 пин тенкĕрен кая мар илеççĕ. Иккĕмĕш вырăнта çĕр кăмрăкĕпе нефть продукчĕсем туса кăларакансем. Виççĕмĕшĕнче – топливăпа энергетика промышленноçĕнче ĕçлекенсем.**

**Ĕç укçин рейтингне тишкерсен отрасльсенчен чылайăшĕ хăйсен яланхи вырăнне сыхласа хăварни курăнать. Хими производстви, курттăм тата вак суту-илӳ тăвакансем кăшт малалла туртăнни те сисĕнет. Хут-хăмăр производствипе полиграфи индустрийĕнче тата металлургинче ĕçлекенсен вара шалăвĕ чакнă.**

**Список вĕçĕнче – хресченсемпе фермерсем. Вĕсем вăтамран 11,5 пин тенкĕ ĕçлесе илеççĕ. Сăранпа пир-авăр производствинче тăрăшакансем те çавăн майлăрах – 10,5 тата 10 пин тенкĕ.**

**Статистика кăтартăвĕсем тăрăх иртнĕ çул вăтам ĕç укçи 18,6 пин тенкĕпе танлашнă.**




*Кăларăма Раççей хаçат-журналĕ тăрăх Е.НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.*

